# Çĕнĕ 2008 çул ячĕпе саламлатпăр!


# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

109 (7534) № ✻ Шăмат кун, 2007 çулхи декабрĕн (раштав) 29-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ


**ХИСЕПЛĔ ЕНТЕШСЕМ!**

Çитсе килекен чи çутă уявсемпе – Çĕнĕ çул тата Сурхури уявĕсемпе сире чĕререн саламлатăп!

Чăваш Ен историйĕн татах тепĕр страницине çырса пĕтертĕмĕр. Пурнăç хăтлăрах та илемлĕрех пултăр тесе республика çине тăрса ĕçлерĕ. Иртсе каякан çулталăкра пирĕн пурнăçра паллă вырăн йышăнаканнисем те сахал мар пулчĕç.

Çул-йĕр строительстви хăвăрт аталанать. Çитес çул Чăваш Ен Раççейре çул-йĕр ыйтăвне татса панă пĕрремĕш регион пулса тăрĕ.

Республикăра 500 тĕслĕх библиотека сетьне йĕркеленĕ. Вĕсем ăс-хакăлпа вĕрентӳ центрĕсем пулса тăраççĕ. Кĕнекесемпе интересленекенсен шайĕ республикăра 40 процент ытла ӳснĕ. В.В. Путин республикăна килсе кайнă май Б.Н. Ельцин ячĕпе хисепленекен Президент библиотекин Атăл тăрăхĕнчи центрне йĕркелеме пăхнă.

«Сывлăх – пурлăх»,– теççĕ халăхра. Сывă нацин кăна тивĕçлĕ малашлăх пур. Сывă пурнăç йĕркине кулленхи пурнăçа кĕртессипе республикăра çине тăрса тĕллевлĕ ĕçлесе пыраççĕ.

Пысăк пĕлтерĕшлĕ наци проекчĕсем пурнăçланаççĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ Раççей Президенчĕ Владимир Путин Чăваш Ене наци проекчĕсем тĕлĕшпе ĕçлессипе лидер тесе палăртрĕ.

Республикăн экономика потенциалĕ ӳссе пырать. Çавна май социаллă задачăсене татса пама, обществăлла инфраструктурăна аталантарма, ĕç укçи шайне хăпартса пыма майсем ытларах. Çынсем ыранхи куна шанăçпа пăхаççĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ Ача çулталăкĕнче ачасем çураласси те 11 процент ӳсрĕ.

Çитес çул та пире интереслĕ те кăткăс самантсем кĕтеççĕ. Аталану çулĕпе татах сулмаклăрах утăмламалла. Çитес çула республикăра Ырă ĕçсен çулталăкĕ тесе палăртнă. Ырă ят ылтăнран çутă тесе ахальтен каламан. Пирĕн тăван çĕр ырă ĕçсемпе палăрса тăтăр! Пĕтĕм чĕререн сире тивĕçлĕ ĕç, телей, ăнăçу, юрату сунатăп, ĕмĕтĕрсем пурнăçланччăр!

Çĕнĕ çул ячĕпе!

**Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В. ФЕДОРОВ.**

## Уяв савăнăç кӳтĕр



Куллен тенĕ пекех районти Культура çурчĕн ĕçченĕсем тăрăшнипе тĕрлĕрен мероприятисем сахал мар пулса иртеççĕ. Çĕнĕ çул уявĕ çитсе пынă май вара кун пек мероприятисем уйрăмах йышлă. Акă, декабрĕн 26-мĕшĕнче районти Культура çурчĕ умĕнче шкул ачисемпе шкул çулне çитменнисене Хĕл мучипе Юр пике кĕтсе илнĕ. Ачасенчен чылайăшĕ хăйсен ашшĕ-амăшĕсемпе пулнă. Çав кун вĕсем валли кунта юмахсемпе вăййăсем тата конкурссем чылай йĕркеленĕ. Çĕнтерӳçĕсем парнесене, маскăсене тивĕçнĕ.

Хĕл мучи Игорь Майков тата Юр пике Светлана Цветкова пултарулăхпа палăрнă, пухăннисене хавас кăмăл парнеленĕ. Кун пек уяв мероприятийĕсене Çĕнĕ çул умĕн татах ирттерме палăртнă.

**Сăн ӳкерчĕкре: Çĕнĕ çул елки тавра карталанса.**

## Арçын ачасем ытларах çураласçĕ

2007 çул вĕçленсе пырать. Кашниех пирĕнтен хăйĕн çулталăкри ĕçне-хĕлне тишкерсе хак парать, кунпа пĕрлех уйрăм çутă самантсем яланлăхах асра юлаççĕ.

ЗАГС пайĕн ĕçĕ-хĕлĕ кашни çынна, кашни çемьене пырса тивекен самантсемпе тӳрремĕнех çыхăннă. Кусем вĕсем çемьесем йĕркеленни тата ача çурални. Ку енĕпе палăрăмлă ӳсĕмсем çук мар. 2007 çулхи декабрĕн 26-мĕшĕ тĕлне ЗАГС пайĕнче çĕнĕрен 232 çемье чăмăртаннине регистрациленĕ. 2006 çулта ку хисеп 206 пулнăччĕ. Иртнĕ çул 366 ача çуралнă пулсан, кăçал çак вăхăта – 424 ача. Арçын ачасем ытларах çураласçĕ. Вĕсем 228. Хĕр ачасем 196 çуралнă.

Йĕкĕрешсене виçĕ çемьере кĕтсе илнĕ. Муркашра пурăнакан Надежда Витальевнапа Сергей Михайлович Романовсен çемйинче йĕкĕрешсем çурални уйрăмах асра юлмалли самант. Ывăлĕсене вĕсем Даниил тата Кирилл ят панă. Кирилл вара районта çуралнă 300-мĕш ача тата çемьере иккĕмĕш пулса тăнă. 2007 çулхи октябрĕн 20-мĕшĕ вара çемье асĕнче яланлăхах юлĕ. Çав кун вĕсене Чăваш Республикин Президенчĕ ачасем çурални çинчен свидетельствăсем тата ача амăшĕн капиталĕн свидетельствине панă.

Декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 216 хĕрарăм ача амăшĕн капиталне тивĕçни пирки право илнĕ. Вăл шутран иккĕмĕш ача çуралнипе – 154 хĕрарăм, виççĕмĕшпе – 44, тăваттăмĕшпе – 9, пиллĕкмĕшпе – 6, улттăмĕшпе, çиччĕмĕшпе тата саккăрмĕшпе – пĕршер хĕрарăм.

Çĕнĕ çул, çĕнĕ телей ячĕпе сире пурсăра та!

**М. РУБЦОВА,**
**район администрацийĕн ЗАГС пайĕн пуçлăхĕ.**

**Вырăнти влаç органĕсенче**

## Ярапайкассисен çĕнĕ пуçлăх

Ярапайкасси ял тăрăхĕн депутатсен Пухăвĕн ларăвĕ пулнă. Депутатсем ку таранччен ял тăрăхĕн пуçлăхĕнче ĕçленĕ А.И. Кудряшовăн ыйтăвне тивĕçтернĕ. Ăна хăй ыйтнипе пуçлăх тивĕçĕсенчен хăтарнă.

Çĕнĕ пуçлăха ял тăрăхĕн депутатсен Пухăвĕн депутатне В.В. Голубева суйланă. Вăл 1980 çулта çуралнă. Предпринимательте ĕçленĕ. Икĕ аслă пĕлӳ илнĕ: агроном, юрист.

**Сăмах – район пуçлăхне**

# Çĕнĕ çулта та пĕр-пĕрне ăнланса пурăнар, ĕçлер

***Вăхăт ытла та хăвăрт иртет çав. Сисмерĕмĕр те, черетлĕ тепĕр çул вĕçленет. 2007 çул историе кĕрсе юлать. Иртсе каякан çулта районти кашни отрасльтех ырă улшăнусем чылай пулчĕç, халăха хумхантаракан ыйтусем ытларах пурнăçа кĕме пуçларĕç. Тумалли вара татах та нумайха.***

***2007 çул мĕнпе асра юлчĕ? Мĕнлерех шухăш-кăмăлпа, ĕмĕт-тĕллевпе кĕтсе илет районăмăр çĕнĕ 2008 çула? Çакăн пирки каласа пама ыйтрăм та ĕнтĕ эпĕ район пуçлăхне Ю. А. ИВАНОВА.***

**– Юрий Александрович, иртсе каякан 2007 çул мĕнле йĕр хăварчĕ пирĕн районшăн?**

– 2007 çул япăх иртрĕ тесе калас килмест. Йывăрлăхсем пулчĕç пулин те, пурте пĕр тĕллевлĕн вăй хунăран аталану çулĕпе черетлĕ утăмсем турăмăр. Пурнăç паян ыйтакан технологие пурнăçа кĕртсе, ӳсĕмлĕрех ĕçлеме тăрăшрăмăр, районăн социаллă-экономика тĕлĕшĕнчи аталанăвĕшĕн тимлерĕмĕр. Ял хуçалăх, промышленность продукцине ытларах туса илессишĕн, обществăлла инфраструктурăна аталантарассишĕн, халăхăн пурнăç шайне лайăхлатассишĕн çине тăрса вăй хутăмăр. Çакă вара йăлтах экономика тĕлĕшĕнчи лару-тăрăва лайăхлатма, налук хумалли никĕсе пысăклатма, пĕтĕм шайри бюджет тупăшне лайăхлатма май пачĕ.

2007 çул çавăн пекех ял тăрăхĕсен администрацийĕсен ĕçлеме пултараслăхне те тепĕр хут кăтартса пачĕ. 2006 çулта 131-мĕш номерлĕ федераллă саккун пурнăçа кĕме пуçласан, пĕрремĕш çулах татăклă утăмсем тума йывăртарах пулчĕ пулсан, 2007 çул ял тăрăхĕсен администрацийĕсем хăйсен тивĕçĕсене пĕлсе тата хăюллăн пурнăçлама пултарнине кăтартса пачĕ. Çăмăлах мар пулин те, хамăрăн пурнăçа хамăрах йĕркелесе пыма пултарнине, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем халăх шанăçне тӳрре кăларма тăрăшнине çирĕплетсе пачĕ çакă.

Иртсе каякан çулта 4 наци проекчĕ малалла пурнăçа кĕчĕ. Çав наци проекчĕсем чăннипех те халăх пурнăçне лайăхлатнине районта пурăнакансем хăйсем çинче тата ытларах туйса илчĕç.

Çавăн пекех 2007 çул ЧР Президенчĕн Указĕпе килĕшӳллĕн Ача çулталăкĕ пулчĕ. Çакă пире çемьесен пĕлтерĕшне ӳстерессипе, ачасене воспитани парассипе çыхăннă ĕçсене вăйлатма хистерĕ. Ачасене йĕркеллĕ воспитани парса ӳстеретпĕр, вĕсене пурнăçри йывăрлăхсене çĕнтерме вĕрентетпĕр пулсан, районăн пуласлăхĕ те çирĕп пулĕ. Çакна асра тытса нумай ĕçсем туса ирттертĕмĕр.

Иртсе каякан 2007 çул çавăн пекех тата акă мĕнпе асра юлчĕ. Чăваш Республикин Президенчĕн Н.В. Федоров çитес çул Республика кунне пирĕн районта ирттересси çинчен Указ кăларчĕ. Çакă хăех республикăна ертсе пыракансем эпир тăвакан ĕçсене ырланине, пире шаннине кăтартса парать. Çавăнпа пĕрлех пире малалла туртăнма хистет. Çĕнĕ çулта иртнинчен яваплăрах та ӳсĕмлĕрех вăй хумаллине пĕлтерет.

**– Районăн 2007 çулхи экономикăпа социаллă пурнăç аталанăвĕн кăтартăвĕсем çинче чарăнар-ха. Чи малтан промышленность предприятийĕсен ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарсамăрччĕ.**

– 2007 çулта промышленность предприятийĕсем 748210 пин тенкĕлĕх продукци кăларса ăсатнă. Ку вăл 2006 çулхинчен 62,4 процент ытларах. Уйрăмах “Муркашри кирпĕч завочĕ” акционерсен уçă обществи ăнăçлă ĕçленине палăртмалла. Вăл малтанхинчен икĕ хут çурăна ыхăн ытларах продукци кăларса реализацилерĕ. Çавăн пекех “Сеспель” чикĕллĕ яваплăхлă обществăн кăтартăвĕ виçĕмçулхинчен 86,4 процент чухлĕ ӳсрĕ. Моргаушпочтамт, “Моргаушрайгаз” филиалĕ, “Милград” чикĕллĕ яваплăхлă общество тата ытти предприятисем ăнăçлă ĕçлесе пыраççĕ.

**– Ял хуçалăхĕнче мĕнле çитĕнӳ турĕ районăмăр?**

– Çăмăл мар пулин те, ял ĕçченĕсем умри тĕллевсене пурнăçлассишĕн ырми-канми тăрăшрĕç. Пĕтĕмпе ял хуçалăх продукцине 349909 пин тенкĕлĕх туса илнĕ. Умри тĕллеве 103 процент тултарнă. Тĕш тырăпа пăрçа йышши культурăсене 19 пин тоннăна яхăн пуçтарса кĕртнĕ. Вăтам тухăç 18 центнера яхăн пулчĕ. Тухăç уйрăмах Ильич яч. хис. (39,7 центнер), Чкалов ячĕпе хисепленекен (35,1 ц.),”Герой” (25,7 ц.) хуçалăхсенче пулчĕ.

Пулас тыр-пул никĕсне хывса хăварассишĕн иртнĕ çул чылай хуçалăх çине тăрса ĕçлерĕ. “Ударник”, Суворов яч. хис., Чкалов яч. хис., “Свобода”, Е. Андреев яч. хис. хуçалăхсенче кĕрхи культурăсен лаптăкĕсене уйрăмах пысăклатрĕç. Пĕтĕмпе вара районĕпе кĕрхи культурăсене виçĕм çулхинчен 41 процент ытларах лаптăк çинче акса хăварнă. Çавăн пекех кĕрхи çĕртмене те 2006 çулхинчен 40 процент ытларах лаптăк çинче турăмăр.

Пирĕн район республикăра çĕр улми туса илессипе те палăрса тăрать. Иртнĕ çул пур шайри хуçалăхсенче ăна виçĕм çулхинчен 20,4 процент – 52,99 пин тонна ытларах туса илтĕмĕр. «Иккĕмĕш çăкăрăн» вăтам тухăçĕ 185 центнер пулчĕ. Ку тĕлĕшпе уйрăмах “Оринино”, “Ударник”, Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăхсем ăнăçлă ĕçлерĕç.

Выльăх-чĕрлĕх сферинче те ырă утăмсем пулмарĕç мар. Иртнĕ çул аш-какая малтанхи çулхинчен 5,8 процент ытларах –7900 тонна туса илтĕмĕр. Пурĕ 48 пин тонна сĕт суса илнĕ е 2006 çулхинчен 4,7 процент ытларах. Кашни ĕнерен вара вăтамран 4257 килограмм сĕт сунă е ун умĕнхи çулхинчен 6,1 процент нумайрах. Мăйракаллă шултра выльăхсен талăкри ӳт хушаслăхĕ 14,2 процент чухлĕ хăпарчĕ, 562 грампа танлашрĕ. Сыснасен талăкри ӳт хушаслăхĕ – 315 грамм.

Çакна палăртмалла, ĕçе пĕлсе йĕркелекен, кĕтĕве çĕнетессипе тимлĕ ĕçлекен, тĕп кĕтӳ йĕркеленнĕ хуçалăхсенче производство кăтартăвĕсем те пысăк. “Ударник”, “Оринино”, “Восток”, “Герой”, Суворов яч. хис. хуçалăхсенче выльăхсен талăкри ӳт хушаслăхĕ тата кашни ĕнерен сĕт сăвасси районти вăтам кăтартуран пысăк.

**– Кирек ăçта ĕçлесен те çынсене ĕç укçи мĕн чухлĕ пулни кăсăклантарать. Иртсе кайнă çулта ку тĕлĕшпе ырă улшăнусем пулчĕçи?**

– 2007 çулта районти вăтам ĕç укçи 5429 тенкĕпе танлашрĕ, виçĕм çулхинчен 49 процент чухлĕ пысăкрах. Апла пулин те ял хуçалăхĕнче ĕç укçи çав-çавах пĕчĕк-ха: 3396 тенкĕ. “Моргаушская” чăх-чĕп фабрикинче”, “Ударник” сăнавпа производство хуçалăхĕнче, Чкалов яч. хис., “Агроурожай” “Оринино”, “Восток” хуçалăхсенче вăтам ĕç укçи районти вăтам кăтартуран пысăк.

**– Юрий Александрович, 2007 çулта халăхăн пурнăç шайĕ татах та ӳсрĕ. Çакна сăнлакан сăлтавсем çинче чарăнсан та аванччĕ.**

– Халăхăн пурнăç шайĕ мĕнле пулни потребительсен таварĕсене мĕн чухлĕ сутнинчен те уççăнах курăнать. Ваккăн сутмалли таварçаврăнăш планне пĕлтĕр пĕтĕмпе 478 миллион тенкĕлĕх пурнăçланă е 144,5 процентпа танлашать. Тавар çаврăнăш Муркаш райповĕпе 31,2 процент, Мăн Сĕнтĕр райповĕпе 23,9 процент чухлĕ хăпарчĕ.

Халăха тӳлевлĕ пулăшусем 66200 пин тенкĕлĕх панă.

2007 çулта инженери тата социаллă инфраструктура объекчĕсене малалла турăмăр. Çакна валли 649004 пин тенкĕ инвестиципе усă куртăмăр. Муркашри Парк урамĕнчи 40 хваттерлĕ çурта туса пĕтерсе хута ятăмăр. Çак урамрах 40 хваттерлĕ тепĕр çурт тума пуçларăмăр. Москакассинче 36 хваттерлĕ çурта тăвассипе ĕçлерĕмĕр. Çĕнĕ çулта унăн пĕр подъездне хута ямалла. Пурĕ иртсе кайнă çулта 30400 тăваткал метр çурт-йĕр тунă. 2007 çулта çавăн пекех район центрĕнчи физкультурăпа сывлăха çирĕплетмелли комплекса тума пуçларăмăр. 2008 çулта Республика кунĕнче хута каймалла вăл.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).

**Вулакансене пĕлме**

## Уяв кунĕсенче те ĕçлеççĕ

Сисмерĕмĕр те, Çĕнĕ çул уявĕсем çитрĕç. Вĕсем йĕркеллĕ иртчĕр тесе районта пур мерăсене те йышăннă. Ăшăпа, шывпа, электричествăпа, газпа тивĕçтерессипе ĕçлекен предприятисем, çавăн пекех пур хăрушсăрлăх службисем пĕр чарăнусăр ĕçлеççĕ.

Районти тĕп больницăн тĕп врачĕ В.Г. Данилов пĕлтернĕ тăрăх, районти тĕп больница декабрĕн 29, 31-мĕшĕсенче, çавăн пекех январĕн 4-мĕшĕнче ĕçлет. Январĕн 3-4-5-мĕшĕсем районти ЗАГС пайĕшĕн ĕç кунĕсем шутланаççĕ. Районти библиотекăсем январĕн 4-5-мĕшĕсенче вулакансене хапăл тусах кĕтеççĕ. Районти историпе краеведени музейĕ январĕн 3-4-5-мĕшĕсенче ĕçлет.

**Л. ПАВЛОВА.**

**Официально**

## Условия размещения

**предвыборных агитационных материалов в Моргаушской районной газете в период избирательной кампании 2008 года по выборам Президента Российской Федерации**

Условия размещения предвыборных агитационных материалов в Моргаушской районной газете на платной основе резервируется печатная площадь.

Общий еженедельный минимальный объем платной печатной площади составляет 5 процентов общего объема еженедельной печатной площади.

Стоимость одного квадратного сантиметра печатной площади – 20 рублей.

**Редакция райгазеты.**

## Шутлă кунсем юлчĕç

**Хаклă вулаканăм! «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата 2008 çулхи январь уйăхĕнчен илсе тăма малалла çырăнтараççĕ.**

**Район хаçатне 6 уйăха çырăнмалли хак – 169 тенкĕ те 62 пус.**

**Çитес çул та пĕрле пулар.**

**Райхаçат редакцийĕ.**